Эффективность расходования бюджетных средств будет определяться исходя из соответствия реализуемых в рамках программы проектов целям и задачам программы, на основе количественных и качественных индикаторов.

Критериями эффективности расходования бюджетных средств служат:

- объем жилищного фонда, на котором выполнен капитальный ремонт;
- доля реализованных (завершенных) проектов по капитальному ремонту;
-снижение размеров обязательных платежей собственников жилья на содержание и текущий ремонт в многоквартирных домах – участниках реализованных проектов по капитальному ремонту.

5.2. Оценка социально-экономических последствий реализации программы.

Эффективное (заинтересованное) управление многоквартирным домом собственниками помещений и общим имуществом при государственной финансовой поддержке позволит решить следующие задачи:

- обеспечение надлежащего использования, содержания и ремонта общего имущества дома;
- обеспечение сохранности общего имущества дома;
-создание комфортных и безопасных условий для проживания граждан;
- ресурсосбережение;
-снижение размера обязательных платежей.

**Приложение № 1**
к муниципальной программе «Капитальный ремонт жилищного фонда Ибресинского района Чувашской Республики на 2008-2012 годы»

**Объем финансирования программы «Капитальный ремонт жилищного фонда Ибресинского района Чувашской Республики на 2008-2012 годы»**

| Годы | Общая площадь капитально отремонтированного жилья, тыс.кв.м. | Объемы финансирования (млн. рублей) | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | всего | федеральный бюджет | республиканский бюджет Чувашской Республики | местный бюджет | средства населения |
| 2008 | 13,4 | 40,2 | 24,12 | 8,04 | 6,03 | 2,01 |
| 2009 | 9,5 | 28,5 | 17,1 | 5,7 | 4,28 | 1,42 |
| 2010 | 7,7 | 23,1 | 13,86 | 4,62 | 3,47 | 1,15 |
| 2011 | 16,0 | 48,0 | 28,8 | 9,6 | 7,2 | 2,4 |
| 2012 | 10,8 | 32,4 | 19,44 | 6,48 | 4,86 | 1,62 |
| Всего | 57,4 | 172,2 | 103,32 | 34,44 | 25,84 | 8,60 |

**Примечание.** Сумма затрат определена из расчета средней стоимости капитального ремонта 1 кв. метра общей площади жилого помещения – 3 тыс. рублей в 2007 году и корректируется ежегодно с учетом инфляции.

**Приложение № 2**
к муниципальной программе «Капитальный ремонт жилищного фонда Ибресинского района Чувашской Республики на 2008-2012 годы»

**Перечень основных мероприятий по реализации муниципальной программы «Капитальный ремонт жилищного фонда Ибресинского района Чувашской Республики на 2008-2012 годы»**

| № п/п | Наименование мероприятий | Срок исполнения (годы) | Ответственные исполнители |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 3 |
| 1. | Определение перечня жилых домов, подлежащих капитальному ремонту в 2008-2012 годах | август 2007г | Администрация района |
| 2. | Разработка и утверждение муниципальной программы капитального ремонта многоквартирных домов | август 2007г | Администрация района |
| 3. | Принятие нормативно-правовых актов по:<br>- увеличению коммерческих организаций коммунального комплекса до 80%;<br>- увеличению доли многоквартирных домов, в которых созданы товарищества собственников жилья до 30%;<br>- формированию и государственному кадастровому учету земельных участков под многоквартирными домами;<br>- переходу на установление тарифов и надбавок, обеспечивающих финансовые потребности организаций коммунального комплекса, необходимые для реализации их производственных программ и инвестиционных программ по развитию системы коммунальной инфраструктуры; | 2007г.<br>2007г.<br>2007г.<br>2007г. | Администрация района<br>------«-----<br>------«-----<br>-------«---- |
| 4. | Защита государственных инвестиций на реализацию программы в федеральных органах исполнительной власти | до 15 января ежегодно | Администрация района |
| 5. | Обеспечение софинансирования | | Минфин |
| 7. | Обеспечение финансирования мероприятий программы за счет средств населения:<br>2,01 млн. рублей<br>1,42 млн. рублей<br>1,15 млн. рублей<br>2,4 млн. рублей<br>1,62 млн. рублей | <br><br>2008 год<br>2009 год<br>2010 год<br>2011 год<br>2012 год | Администрация района |
| 8. | Капитальный ремонт многоквартирных домов:<br>13,4 тыс. кв. метров<br>9,5 тыс. кв. метров<br>7,7 тыс. кв. метров<br>16 тыс. кв. метров<br>10,8 тыс. кв. метров | <br>2008 год<br>2009 год<br>2010 год<br>2011 год<br>2012 год | Администрация района |
| 9. | Информационное обеспечение хода реализации программы | постоянно | Администрация района, Минстрой Чувашии |

**Приложени**
к муниципальной программе «Капитальный ре жилищного фонда Ибресинского ра Чувашской Республики на 2008-2012 г

**Система индикаторов оценки социально-экономическ эффективности программы «Капитальны ремонт жилищного фонда Ибресинского района Чувашской Республики на 2008-2012 годы»**

| Индикатор | Факт за 2006 г. | Целев значени 2012 |
|---|---|---|
| ежегодное увеличение объемов проведенного капитального ремонта многоквартирных домов | 3,7 тыс. кв.м. | 10,8 кв.м. |
| доля многоквартирных домов, в которых созданы товарищества собственников жилья | 5% | 30% |

## НАШИ КОНСУЛЬТАЦИИ

# РАБОТА В РАМКАХ АДМИНИСТРАТИВНОГО РЕГЛАМЕНТА

В государственном учреждении Центра занятости населения Ибресинского района с января текущего года началась работа по внедрению административных регламентов по предоставлению государственных услуг:

– по содействию гражданам в поиске подходящей работы, а работодателям в подборе необходимых работников;

– по осуществлению социальных выплат гражданам, признанным в установленном порядке безработными;

– по информированию о положении на рынке труда в субъекте Российской Федерации;

– по организации временного трудоустройства отдельных категорий граждан.

Все четыре регламента подготовлены в Роструде, утверждены приказами Министерства здравоохранения и социального развития ЧР и зарегистрированы Минюстом Российской Федерации.

С одной стороны, регламенты призваны помочь гражданам разобраться в услугах, оказываемых органами службы занятости: порядке их оказания, сроках и последовательности действий органов, участвующих в оказании государственных услуг, возможных формах обращения граждан в центры занятости, перечне необходимых для получения услуги документов или оснований для отказа в ее предоставлении и т. д.

С другой стороны, регламенты нужны для самой службы занятости: в них четко прописаны должностные инструкции, обязанности и нормативы для оказания услуг, а также сроки реагирования инспекторов службы на запросы граждан.

Необходимость разработки, принятия и внедрения административных регламентов обусловлена не только устойчивым спросом со стороны незанятого населения на услуги, представляемые службами занятости, но и тем, что с 1 января 2007 года федеральные полномочия в сфере содействия занятости населения и защиты от безработицы переданы на уровень государственной власти субъектов Российской Федерации.

В центре занятости на сегодня произошли значительные перемены: обучен персонал, пересмотрен график приема получателей государственных услуг. Идет переоборудование и техническое оснащение кабинетов, зала ожидания. Изменены сроки предоставления государственной услуги содействия гражданам в поиске подходящей работы, а работодателям в подборе необходимых работников:

– государственная услуга содействия гражданам в поиске подходящей работы предоставляется в день обращения без предварительной записи;

– максимально допустимое время предоставления государственной услуги содействия в поиске подходящей работы гражданам, впервые обратившимся в центр занятости, не должно превышать 55 минут;

– максимально допустимое время предоставления государственной услуги при последующих обращениях 45 минут.

Есть существенные изменения в регламентах по отношению к работодателям. Работодатель изначально всегда был партнером службы занятости, а сейчас стал еще и клиентом. Основанием для начала предоставления государственной услуги содействия в подборе необходимых работников является обращение работодателя или его представителя в центр занятости. Представитель организации, впервые обратившийся за помощью в подборе необходимых работников, не должен ждать ответа от службы больше 55 минут. Причем за первые пять минут специалист службы должен исследовать все документы. Еще пять минут выделено на информирование представителя работодателя о процедурах, его правах и обязанностях. Потом заявка вводится в компьютер, ей присваивается индивидуальный номер.

Далее начинается процедура поиска: сотрудник службы задает представленные работодателем параметры (специальность, квалификация и т. д.) и выводит список из регистра. Представитель организации выбирает подходящих ему соискателей.

Обязательное условие работы с центром занятости – уведомление со стороны работодателя об итогах собеседования.

Работодателю также нужно помнить, что нанятому через службу занятости работнику надо будет платить заработную плату не менее той, которая была указана в заявке. Для получения информации о работниках представителю компании достаточно заполнить специальную заявку, анкету с требованием к работникам, представить копию свидетельства о государственной регистрации юридического лица. В заявлениях указывается объем социальных гарантий, режим рабочего дня, размер заработной платы и т. д.

Ответы на возникшие вопросы можете получить по телефонам: 2-19-82, 2-25-96.

***О. ТКАЧЕНКО,***
***директор ГУ Центр занятости населения Ибресинского района.***


**ВНИМАНИЮ РУКОВОДИТЕЛЕЙ, ГЛАВНЫХ БУХГАЛТЕРОВ ПРЕДПРИЯТИЙ, ОРГАНИЗАЦИЙ, ХОЗЯЙСТВ, УЧРЕЖДЕНИЙ**

**РГУ «Редакция Ибресинской районной газеты «Çĕнтерӳшĕн» («За победу») принимает заказы на изготовление всех видов бланочной, этикеточной и книжно-журнальной продукции.**

**В продаже имеются: приходные, расходные кассовые ордера, путевые листы легковых и грузовых автомобилей, товарно-транспортные накладные, авансовые отчеты, накладные, доверенности, командировочные удостоверения, табеля использования рабочего времени, личные карточки, амбарные, главные кассовые книги, книги покупок и продаж, книги по заработной плате, книги учета расходов и доходов. Цены низкие.**

**Обращаться по адресу: п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6, 1 этаж, к начальнику производственного участка редакции газеты или по телефону: 2-11-97.**


# В РАЙОНЕ ЕЩЕ ИМЕЮТСЯ НЕДОБРОСОВЕСТНЫЕ ПЛАТЕЛЬЩИКИ НАЛОГОВ

**- Скажите, пожалуйста, имеются ли в Ибресинском районе налогоплательщики, регулярно допускающие неуплату налогов в установленные налоговым законодательством сроки?**

- К сожалению, такие налогоплательщики в районе имеются. Инспекцией ежемесячно на первое число месяца проводится анализ своевременной и полной уплаты налогов налогоплательщиками. Данный анализ показывает, что ниже перечисленными организациями и индивидуальными предпринимателями Ибресинского района регулярно допускаются факты неуплаты (не полной уплаты) налогов в сроки, установленные налоговым законодательством, в связи с чем налоги в бюджеты всех уровней поступают несвоевременно:

1. ИП Тимошкин Алексей Александрович ИНН 210500178611
2. ИП Дарчиев Лерри Альбертович ИНН 210501879698
3. ИП Ефремов Юрий Витальевич ИНН 210501490005
4. ИП Вахитов Фердинат Ринатович ИНН 210500014525
5. ИП Волкова Факия Галялтдиновна ИНН 210500177103
6. ИП Петров Валерий Ферапонтович ИНН 210500378829
7. ИП Алимов Асхат Расикович ИНН 210500008507
8. ИП Герасимов Петр Михайлович ИНН 210500126162
9. ИП Павлов Сергей Геннадьевич ИНН 210501032460
10. ГУ «Ибресинский лесхоз» ИНН 2105001703
11. ЗАО Агрофирма «Ибресинская» ИНН 2105003958
12. Колхоз «Трудовик» ИНН 2105000516
13. МП «Жилищно-коммунальное хозяйство» Ибресинского района ИНН 2105000643
14. ОАО «Ибресинский молочный завод» ИНН 2105000139
15. ООО «Агрострой» ИНН 2105001862
16. ООО «ПКФ Золотой колос» ИНН 2105002714
17. СХПК «Знамя» ИНН 2105000964
18. СХПК «Возрождение».

В отношении данной категории должников Межрайонной ИФНС России №3 по Чувашской Республике постоянно применяется весь комплекс мер принудительного взыскания, предусмотренный Налоговым кодексом Российской Федерации.

**В. СПИРИДОНОВ,**
**начальник отдела анализа, отчетности и урегулирования задолженности.**

ЖУРНАЛИСТ ШУХĂШĔ

# ЯЛА МĔНЛЕ ЕРТӲÇĔ КИРЛĔ?

**Хăш-пĕр ученăй-аграрниксем çирĕплетнĕ тăрăх, Раççейри ял хуçалăхăн вăй-хăвачĕ пысăк иккен. Çапла-ши? Статистика кăтартăвĕсем урăххи çинчен калаççĕ. Паян пирĕн çĕршыври чи пулăхлă регионсем те, пĕтĕмĕшле кăтартусемпе илсен Швеципе Голландирен кая юлса пыраççĕ-çке. Çав патшалăхсем Европăн çурçĕр пайĕнче вырнаçнине шута илсен, пирĕн ӳсĕмсем мухтанмалăх çук. Ялсем паянхи вăхăтра пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкнине ăнлантарса пама тăрсан, аграрниксенчен чылайăшĕ акă мĕнле шухăш патне пырса тухаççĕ: ял хуçалăхне малалла аталанма çунтармалли-сĕрмелли япаласен хакĕсем ӳсни, дотацисемпе субсидисем çителĕксĕр пулни т. ыт. те чăрмантараççĕ-мĕн. Кунпа килĕшмесĕр тăма çук, анчах та пĕтĕмпех мар. Пирĕн тăрăхра хальлĕхе пĕрешкел лару-тăрурах хуçалăхсем тĕрлĕрен аталанса пыни лайăх сисĕнет, пĕрисем ӳсĕмлĕ, теприсем тăкаклă ĕçлеççĕ. Ӳсĕмсемпе çитменлĕхсен тĕп сăлтавĕсем ăçта? Ку ыйту çине çакăн пек хурав пама пулать: пĕрремĕш вырăна тухса тăраканни – çын факторĕ.**

Лайăх ас тăватпăр-ха, Совет влаçĕн çулĕсенче аграри реформисене пурнăça кĕртес ĕçри тĕп вăй ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи шутланатчĕ. Тĕслĕхшĕн инçене кайма кирлĕ мар. Хăйсен ĕçĕхĕлĕпе, ăсталăхĕпе, çынсене итлеттерме пултараслăхĕпе чыс-хисеп çĕнсе илнĕ пуçлăхсем хамăр районта та йышлăччĕ. Хăшĕ-пĕрисене аса илĕпĕр. Ку тăрăхри пĕртен-пĕр Ĕç Геройĕ Антон Григорьевич Шордеев, Александр Трофимович Тазенов, Георгий Семенович Ильин, Николай Никифорович Кузюков, Михаил Иванович Железин, Гурий Андреевич Андреев, Велит Керимович Керимов, Алексей Никитич Кузьмин, Виталий Николаевич Руссков...

Анчах та Раççейри социологсем ирттернĕ ятарлă ыйтăм кăтартăвĕсемпе паллашнă хыççăн ирĕксĕрех шухăша улăштарма тивет: ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисене хисеплесси паян кирлĕ шайра мар иккен. Куншăн вĕсем хăйсем те айăплă-ха. Шăпах вĕсене пула, тăкаклă хуçалăхсем йышланаççĕ, çĕр ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре те ӳсĕмсем çителĕклĕ мар. Ертӳçĕсен хăйсен те тӳрре тухмалли сăлтавĕсем пур: рынок хакĕсем час-часах улшăнса тăни, çутçанталăкăн тăпрапа климат условийĕсем çирĕп пулманни, техника, çĕнĕ технологисен хакĕсем пысăкки.

Выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç отраслĕ – ял хуçалăхĕн чи кая юлнă отраслĕ. Кунти кăлтăк-çитменлĕхсене шутласа тухма икĕ алăри пӳрнесем те çитес çук. Вĕсенчен хăшĕпĕрисене асăнса иртнипех çырлахăпăр: ĕç условийĕсем япăх пулни, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ пĕчĕкки, выльăх апачĕн пахалăхĕ тивĕçтерменни, фермăсенчи ĕç тухăçлăхĕ кирлĕ шайра пулманни, хавхалантармалли майсемпе кирлĕ пек усă курманни... Юрать-ха, хальлĕхе ял хуçалăх предприятийĕсене килсенчи хушма хуçалăхсем витĕмлĕ пулăшу парса пыраççĕ.

Цифрăсем çакна çирĕплетеççĕ: ыранхи кунпа пурăнман ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем финанс тĕлĕшĕпе йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ, вĕсем пысăк тăкаксем тӳсеççĕ, эффективлă ĕçлеме май паракан меслетсене çул памаççĕ. Тӳрре тухмалли сăлтавĕсем – хамăр çӳлерех асăннисемех. Вĕсем Правительствăн аграри тĕлĕшĕпе тытса пыракан çулйĕрне ырласах каймаççĕ.

Юлашки вăхăтра пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисен ĕçĕ-хĕлĕнче те палăрăмлă улшăнусем курăнма пуçларĕç. Рынок экономики майĕпенех хăйĕн çулĕ çине тăратать вĕсене. Ку ĕçре мĕнле ыйтусене тĕп вырăна хумалла-ха? Паллах, малтисен опытне сарса пырасси, шанчăклă технологисене ĕçе кĕртесси, планлă экономика «çуратнă» ертӳçĕсене çамрăксемпе улăштарасси – çав ыйтусем çине тимлĕхе ытларах хумалла. Пытармăпăр, халĕ хăш-пĕр пуçлăхсен пĕлӳ шайĕ те, тавракурăмĕ те рынок хушăвĕсене тивĕçтерейместь. Менеджментлăх шайĕ те пĕчĕк вĕсен, предприниматель туртăмĕ те çук, экономика, юридици ыйтăвĕсене татса параймаççĕ.

«Трактор тухăçлă ĕçлет-и?» – текен ансат кăна ыйту парса пăхар. Чăн та, ял хуçалăх ĕçĕсен вăхăтне кĕскетес, хĕрӳ тапхăрта тухăçлăрах ĕçлес тесен, тракторсен паркне ӳстермелле. Анчах та çакă шанчăклă çул-йĕр мар паян, хальхи условисенче çĕнĕ техника туянма мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кирлĕ! Трактор – ачана выляма кăларнă тетте мар. Апла-тăк, урăхла çул-йĕрпе каймалла. Вăл – трактортăн ĕçлеслĕхне ӳстерме пулăшакан мел. Техникăна вăхăтра пăхса-асăрхаса тăмалла, тăкаксем тума памалла мар. Паянхи ертӳçĕн çавна питĕ лайăх пĕлмелле. Вăл çĕр-аннемĕре юраттăр, хресчен ĕçне хисеплетĕр, унра çĕннине пĕлес туртăм çуралтăр, лайăххине япăххинчен хăвăрт уйăрса илме пĕлтĕр. Çав енсем çук пулсан, пĕрлешӳллĕ хуçалăха ăçтан-ха йĕркеллĕ ертсе пыма пултартăр çакăн пек ертӳçĕ?

Çĕнĕ вăхăтăн тĕллевĕсем те урăхларах. Çур ĕмĕр каялла тунă ĕç çине паян урăх куçпа, урăх шухăшпа пăхмалла. Çакна кашниннех асра тытмалла: кашни çыннах хăйне лайăх туять тĕк, пурне те – лайăх, кашниех пуян тăк, çĕршыв та пуян.

Тепĕр чухне тахçанах çирĕпленнĕ концепцирен те ютшăнмалла мар. Общество спираль тăрăх аталанса пырать пулсан, вăл çĕнĕ çаврăм тунă вăхăтра малтан хывнă йĕре те перĕнсе илет. Эпир халь уйрăм çын харпăрлăхĕ патне тепĕр хут çаврăнса çитни те çавнах çирĕплетет.

Служба ĕçĕпе эпĕ час-часах колхозсемпе кооперативсене тухса çӳретĕп, ертӳçĕсемпе инженери, техника службисен çыннисемпе калаçатăп, фермерсемпе, малта пыракансемпе тĕл пулатăп. Кашни хутĕнче тенĕ пекех калаçу çын факторĕ патне çитет. Çак ыйтăва тĕпе хумасан, темĕнле пысăк пĕлӳллĕ ертӳçĕ те палăрăмлă ӳсĕмсем тăваймĕ.

***Г. КУЗНЕЦОВ.***

СЫВЛĂХЛĂ ПУЛĂР

# ПЫЛ, ШĔВЕКСЕМ ТАТА СОКСЕМ...

**Ӳслĕкрен мĕнле хăтăлмалла? Халăх медицини йӳç кăшманпа пыл хутăшне сĕнет.** Паллах, малтан çимĕçе лайăх çуса тасатăр, çĕçĕпе çӳлти пайне касса илĕр те, унта икĕ кашăк шĕвĕ пыл вырнаçмалăх хăвăл тăвăр. Йӳç кăшмана шăпах хăй калăпăшĕпе прешкел савăта çӳлтен аялалла вырнаçтарса, ăна хытă хутпа витсе хурăр, çапла 3-4 сехет тытăр. Çитĕннисемпе ачасене çак сока кунне 3-4 хутчен апат умĕн чей кашăкĕпе ĕçтермелле. Çывăрас умĕн ĕçсен те лайăх.

**Карланкăпа тип пыр шыççан сар çип утипе /зверобой/ прополис сиплĕхлĕ.** Çак курăка пĕр апат кашăкĕ илеççĕ, ăна вĕретнĕ шыва ярса, 15 – 20 минут хушши тытаççĕ, ун хыççăн тăрăлтарса сăрăхтараççĕ. Пыра пĕрре чӳхеме çур стакан çителĕклĕ. Çавăнта 20 тумлам прополис настойкине хушмалла. Пыра талăкра икĕ-виçĕ хут чӳхемелле. Çак ырă шăршăллă шĕвек чире малалла аталанма чарса тăрать.

**Сунас ерсен, чĕрĕ хĕрлĕ кăшманпа пыл пулăшу параççĕ.** Унпа мĕнле усă курмалла-ха? Халăх медицини çапла тума сĕнет: пыла хĕрлĕ кăшман шĕвекĕпе хутăштармалла, кашни сăмса шăтăкне çав шĕвеке пĕр кунра тăвата-пилĕк хут (вăйлă сунаслă чух) ямалла. Çак меслет вăраха тăсăлнă сунаса сипленĕ чухне те лайăх витĕм кӳрет. Вăл çавăн пекех ачасене аденоид аталаннă вăхăтра ерекен сунасран хăтăлма та пулăшать.

**Вар-хырăмри шĕвĕрĕлченсене мĕнле «хăваласа» кăларма пулать? Кунта кавăн вăррипе тата пылпа усă курни усă парать иккен.** Пыл тула тухаймасăр аптранă чухне те кирлĕ. Пылпа кавăн ăшне хутăштарнă «пăтă» еплерех техĕмлĕ! Пĕçернĕ кавăнпа пыл хутăшĕ те сиплĕхлĕ.

**Пыршăлăха тасатнă чухне усă курма халăх медицини çак меслете сĕнет:** 400 г типĕтнĕ шăмăсăр абрикос, çавăн пекех 400 г вăррисенчен тасатнă слива тата пĕр пачка Александрийăра ӳсекен çулçă илеççĕ, вĕсене аш «арманĕ» витĕр кăлараççĕ. Вĕтетнĕ массăна 200 грамм таса пыл хушаççĕ, лайăх пăтратаççĕ. Пылăн шĕвĕ пулмалла. Шĕвеке каçхи апат умĕн пĕрер чей кашăкĕ ĕçсен усăллăрах, ăна ăшă шывпа ĕçмелле. Виçине кашни çын хăй палăрттăр.

**Ват хăмпи тата ват хăмпин çулĕсем чирлесен,** халăх медицини пĕçернĕ кукуруза пуçне пылпа пĕрле çиме сĕнет.

**Юн пусăмĕ ӳссе кайсан** вара халăх медицини пахчаçимĕç сокĕсене пылпа хутăштарса ĕçме сĕнет. Тĕслĕхрен, çакăн пек рецепт вырăнлă: кăшман, кишĕр, йӳç кăшман сокĕсене пылпа пĕрешкел виçепех (пĕрер стакан) хутăштармалла. Шĕвеке талăкра виçĕ хутчен икĕ-виçĕ уйăх таранах ĕçмелле. Ăна тĕттĕм те сивĕ вырăнта усрамалла.

**Хырăм пăсăлсан,** чĕкеç курăкĕпе (подорожник) пыл хутăшĕ еплерех усă кӳнине авалхи кĕнекесенчех çырнă. Эсир те тĕрĕслесе пăхма пултаратăр. Хутăша çапла хатĕрлеççĕ: 500 грамм пыла 500 грамм чĕкеç курăкĕн сокĕпе хутăштараççĕ, çавăн хыççăн ерипен çунса тăракан çулăм çинче 20 минут тытаççĕ. Сивĕтнĕ сока апат умĕн апат кашăкĕпе кунне виççĕрен кая мар ĕçмелле.

Çакăн пек хутăшах (анчах ăшшине) коклюш, бронхит чирĕсемпе аптрасан ĕçме сĕнеççĕ. Вăл çăра сурчăка ӳсĕрсе кăларма пулăшать.

**Ӳслĕк ерсен, халăх медицини çак меслете те сĕнет.** Пĕр чей кашăкĕпе илнĕ пыла анис вăррипе тата (икĕ апат кашăкĕ чухлĕ) чĕптĕм тăварпа хутăштараççĕ. Пĕтĕмпех пĕр стакан шыва ямалла, шыва вĕреме кĕртмелле, ун хыççăн сăрăхтарса, сивĕтме лартмалла. Кашни икĕ сехетренех икшер апат кашăкĕ ĕçсе пымалла.

Пĕчĕккисем валли сĕнекен меслет: 1:1 шутпа пыла тата ăшă олифа çуне хутăштараççĕ, шĕвеке кунне темиçе хутчен те пĕрер чей кашăкĕ ĕçтермелле.

# ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ПĂХАКАНСЕН ĔÇ ПĔТĔМЛЕТĔВĔСЕМ

Районти хуçалăхсенче кăçалхи сакăр уйăхра 715,6 тонна аш-какай туса илнĕ, иртнĕ çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан, 18 процент ытларах. Ку енĕпе «Рассвет» УАО кăтартуллă ӳсĕмсем тăвать. Унта сысна ашĕ туса илессине 2 хута яхăн ӳстернĕ. Ку хуçалăхра самăртмалли сыснасен йыш хăвăрт хутшăнса пырать.

Çулталăк пуçланнăранпа сĕт сăвассин кăтартăвĕ 3140,6 тоннăпа танлашрĕ. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 10 тонна сахалтарах. Сĕт сăвас енĕпе ӳсĕмлĕ ĕçлесе пыракан хуçалăхсен йышне çаксем кĕреççĕ: «Красный партизан» колхоз (сăвăма 14 процент ӳстернĕ), «Заря» колхоз (14 процент), «Искра» колхоз (7 процент), «Патман» хуçалăх (6 процент). Районĕпе кашни ĕнерен вăтамран 2201 килограмм сĕт суса илнĕ, 2006 çултипе танлаштарсан, 107 процент пулать. Районти чи лайăх кăтарту «Патман» хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх пăхакансен – 3004 килограмм. Сĕт туса илессипе районăн вăтам кăтартăвĕнчен иртме пултарнисен йышĕнче «Ибресинская» агрофирма» хупă акционерлă пĕрлешӳ – 2762 кг, «Красный партизан» колхоз – 2522 кг, «Искра» колхоз – 2295 кг, Калинин ячĕллĕ хуçалăх – 2290 кг, «Заря» колхоз – 2119 кг.

# ÇАМРĂК ÇЕМЬЕСЕНЕ ÇУРТ ТУМА – СУБСИДИ

Кăçал пĕтĕмпе районта 16,77 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çурт-йĕр хута янă, 134 пурăнмалли çурт туса лартнă. Çав шутра çурла уйăхĕнче кăна 5730 тăваткал метр чухлĕ çурт-йĕр тунă, 51 пӳрт хăпартса лартнă.

«Ялăн 2010 çулчченхи социаллă аталанăвĕ» федераллă программăпа килĕшӳллĕн граждансене пӳрт-çурт çавăрма федераци бюджетĕнчен каялла тавăрса памалла мар 890 пин тенкĕ чухлĕ субсиди панă. Çак укçана ялта ĕçлесе пурăнакан 6 çемьене пайласа панă. Субсиди укçипе усă курса вĕсем 750 тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çурт-йĕр тума пăхнă.

Çӳлерех асăннă программăн тепĕр пункчĕпе килĕшӳллĕн çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтермешкĕн каялла тавăрса памалла мар субсиди 1645,1 пин тенкĕ чухлĕ валеçсе пама палăртнă. Кăçал тепĕр икĕ çамрăк çемье тепĕр 358 пин тенкĕ субсиди илмелле. «Пурăнмалли çурт-йĕр» программăн «Çамрăк çемьесене пурăнмалли çуртпа тивĕçтересси» çум программипе 2006-2007 çулсенче 23 çамрăк çемье 6172110 тенкĕ чухлĕ субсиди илнĕ.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

дорогого, любимого мужа, внимательного и заботливого отца, сына, зятя – **ЛАБИНОВА Сергея Витальевича** (п. Ибреси) с днем рождения! Желаем крепкого здоровья, бодрого настроения, твердости духа на долгие годы, счастья, успехов, благополучия во всем и всегда.

Пусть будет в жизни все, как прежде:
Любовь, уверенность, надежда,
Движенье к цели и удача,
А сердце – добрым и горячим.
Чтоб выпадал билет счастливый,
Чтоб отпуск не был твой дождливым,
Больших успехов на работе,
И у начальства быть в почете!

***С любовью ЖЕНА, СЫН, РОДИТЕЛИ, ТЕЩА.***

х х х

**Полину Сергеевну ЗАХАРОВУ** (с. Чуваш-Тимяши) с Днем рождения! Желаем много радостных дней, удачи, успехов в работе, счастья и благополучия в личной жизни.

Будь счастливой, будь любимой,
Будь удачливой во всем,
Чтобы все печали мимо,
Чтобы только радость в дом.
Живи, улыбайся невзгодам – годам,
Заботы разделим с тобой пополам.
Забудь о болезнях, тревогах забудь,
Любовью осветим твой жизненный путь.

***СЫНОВЬЯ, ДОЧЕРИ, СНОХИ, ЗЯТЬЯ, ВНУКИ И ВНУЧКИ, БРАТЬЯ, СЕСТРЫ, КУМОВЬЯ И СОСЕДИ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Савнă мăшăра, ылтăн-кĕмĕлрен те хаклă тăванăмăра, ял çинче ырă ятлă, халăх хушшинче хисеплĕ пиччене, шăллăма, куккана – Пăкăянта пурăнакан **Геннадий Анатольевич ПЕТРОВА** – паллă кун ячĕпе кăмăл-туйăмсен тараватлăхĕпе тулнă салам яратпăр: çывăх çыннăмăр чаплă юбилей кĕрекине ларать, 60 çул тултарать.

Юратнă çыннăмăр эс пирĕн,
Эс хаклă пирĕншĕн темрен.
Ыр-сывă пурăн ĕмĕр-ĕмĕр,
Салам сана чун-чĕререн!
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма та ĕçлеме вăй парса тăрать.
Ялан пулсамччĕ эс пирĕнпе пĕрле,
Кил-йышра, тулли кĕрекере.

***МĂШĂРĔ, АППĂШĔ, ЙĂМĂКĔ, АНДРЕЕВСЕМ, ЯЗЫКОВСЕМ, СЕРГЕЕВСЕМ, НИКИФОРОВСЕМ, КОНСТАНТИНОВСЕМ,ТĂВАНĔСЕМ.***

ЭСИР ПĔЛЕСШĔНЧЧĔ

**Кашни çемье пурнăçĕнчех хăйне уйрăм уявсем ирттересси йăлана кĕрсе çирĕпленнĕ. Вĕсенчен пĕри – çемье чăмăртаса туй тунă куна кашни çулах паллă тăвасси. Эсир миçе çул мăшăрпа пĕрле пурăнса ирттеретĕр – сирĕн çавăн чухлĕ çемье уявĕсем пулаççĕ. Анчах та пĕлетĕр-и-ха эсир çав туйсен хăйсен ячĕ пуррине тата халăхра ĕлĕкренех пыракан йăласене?**



# Туй ячĕпе!

Сăмахран, туй туса пĕрлешнĕренпе шăп та лăп çулталăк иртнĕ хыççăн, **ÇИТСĂ** туй пулать. Çамрăк мăшăрсем пĕр-пĕрне çитсă-пусмаран çĕленĕ тутăрсем парнелеççĕ.

**ЙЫВĂÇ** туй – пĕрле пурăнма тытăннăранпа 5 çул иртнĕ хыççăн паллă тăваççĕ.

**ЦИНК** туй – 6 çултан килет. Çак дата сирĕн хушăри çыхăнусене, цинк савăт-сапана хушăран йăлтăрккапа сĕрме кирлĕ пекех, çĕнĕлĕх кĕртмелли çинчен аса илтерет.

**ПĂХĂР** туй – 7 çултан паллă тăваççĕ. Мăшăрсем пĕр-пĕрне пăхăр çĕрĕсем тăхăнтараççĕ, çителĕклĕ пурнăç, телей пултăр тесе пăхăр укçасем параççĕ.

**ШĂВĂÇ** туй – çырăннăранпа 8 çул иртнĕ хыççăн килет. Çак кун кил-тĕрĕшре усă курма кирлĕ хатĕр-хĕтĕр парнелеççĕ.

**РОЗА** туй – хут куçарттарнăранпа шăп та лăп 10 çул çитнĕ кун палăртаççĕ. Çак туя паллă тума килекен хăнасем розăсемпе пыраççĕ. Чечек çыххинче – 11 роза.

**НИКЕЛЬ** туй – 12 çул. Çемьери хутшăнусем никель пекех таса пулмаллине аса илтерет.

**КĔЛЕНЧЕ** туй – мăшăрланнăранпа 15 çул çитнине паллă тунă кун. Упăшкипе арăмĕн хутшăнăвĕсем кĕленче пекех янкăр çутă пулмаллине астутаракан уяв. Кĕреке хăнисем кантăкран тунă парнесемпе савăнтараççĕ.

**ФАРФОР** туй – 20 çултан паллă тăваççĕ. Уяв сĕтелĕ çине апат-çимĕçсемпе, пахча-çимĕçсемпе тултарнă фарфор савăтсем лартаççĕ.

**КĔМĔЛ** туй – чĕрĕк ĕмĕр, 25 çул çитсен килет. Çак туя мĕнпур тăвансене чĕнеççĕ. Мăшăрсем ылтăн çĕрĕпе юнашар пӳрне çине кĕмĕл çĕрĕсем тăхăнтараççĕ пĕрпĕрне.

**АХАХ** туй – мăшăр пĕрле пурăнма тытăннăранпа 30 çул çитнине паллă тăваççĕ. Упăшки арăмне ахахран тунă асăнмалăх парне парать.

**ПИР** туй – пĕр çемьене чăмăртаннăранпа 35 çул çитсен палăртаççĕ. Мăшăрсене тăванĕсемпе çывăх çыннисем пир алшăллисемпе вырăн хатĕрĕсем парнелеççĕ.

**РУБИН** туй – 40 çултан пулать. Упăшки арăмне хĕрлĕ рубинпа илемлетнĕ çĕрĕ парать. Ку вĕсен хушшинчи çыхăнусем çирĕпленсех çитнине пĕлтерекен паллă.

**ЫЛТĂН** туй – 50 çул. Мăшăрсем пĕр-пĕрне çĕнĕ ылтăн çĕрĕсем тăхăнтартаççĕ. Малтанхисен тĕсĕ те тĕксĕмленнĕ, пӳрнесене юратми те пулнă. Çĕннисем çĕнĕ вăй-хал параççĕ.

**АЛМАЗ** е **БРИЛЛИАНТ** туй – 60 çултан килет. Çыхăну çирĕп пулнине пĕлтерсе мăшăрсем тăванĕсем умĕнче пĕр-пĕрне юрату паллиллĕ парнесем параççĕ. Тăван-пĕтенсем енчен пĕрле пуçтарăнса илнĕ парне – бриллиантпа илемлетнĕ çĕрĕсем.

**ТИМĔР** туй – пĕр-пĕрне юратса пĕрлешнĕренпе 65 çул çитсен. Кил-çуртра усă курмалли савăт-сапа, хатĕрхĕтĕр парнелеççĕ.

**ЧУЛ** туй – 67 çул çитсен килет. Тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ парнесем параççĕ.

**ТИВЛЕТЛĔ** туй – 70 çул. Пĕрле çичĕ теçетке çул пурăннисем хăйсен хушшинчи юратупа тулнă çыхăну ĕмĕрлĕхех пулнине çирĕплетсе параççĕ.

**ХĔРЛĔ** туй – ĕмĕрлĕх туй. Мăшăрсем 100 çул пĕрле пурăннине паллă тăваççĕ. Кунтан та ытларах çул мăшăрлă пурăннă рекордсене шута илни халиччен пулман.

## КĔР МĂНТĂРĔПЕ ТУЙСЕМ КĔРЛЕÇÇĔ

Район администрацийĕн ЗАГС пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи çурла уйăхĕнче пирĕн районта 22 мăшăр пĕрлешнине регистрациленнĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 1 мăшăр сахалрах пулать. Уйрăлса каякан мăшăрсем те пур-ха, иртнĕ уйăхра 4 çемье арканнă.

Демографи лару-тăрăвĕпе малалла паллашатпăр: çак тапхăрта 35 çын çут тĕнчерен уйрăлса кайнине пăшăрхантаракан пулăм, 34 ача çуралнине савăнтаракан пулăм тесе хаклама пулать. Пĕлтĕрхи çурла уйăхĕпе танлаштарсан, çуралнă ачасен йышĕ иртнĕ çултинчен 12 пепке ытларах.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

**РЕДАКЦИРЕН: Хаклă вулаканăмăрсем! Хăвăр çывăх çыннăрсене, хисеплĕ тăванăрсене, юратнă тус-юлташăрсене туй ячĕпе «Çĕнтерӳшĕн» хаçат урлă саламламаваскăр. Сирĕн чун-чĕререн тухнă сăмахсем хаçат страницисем çинче пичетленсе тухни пĕр-пĕрне юратса пĕрлешекен çамрăк мăшăрсемшĕн темĕнле пысăк парнерен те хаклăрах пулĕ, ĕмĕр асăнмалăх юлĕ. Саламсене райхаçат редакцийĕнче, 2-мĕш хутра, бухгалтери пӳлĕмĕнче йышăнаççĕ. Туй саламĕсен хакĕсем: сăнӳкерчĕкпе – 170 тенкĕ, сăнӳкерчĕксĕр – 120 тенкĕ.**

## ТАВ ТĂВАТПĂР

Инкек нихăçан та куçа курăнса килмест. Анатриялта авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче çĕрле пушар тухнă. «Хĕрлĕ автан» тӳрех икĕ кил-хуçалăх хуралтисем çине сиксе ӳкнĕ.

Вут-кăварăн алли вăрăм, теççĕ. Вăл пĕр алхасма тытăнсан, ăна çăварлăхлама та çук. Юрать-ха ял-йыш кун пек инкексенче çухалса каймасть, мĕнпур вăйсене пĕр çĕре пухса, пĕр çын пек пулса кĕрешĕве тухать. Тавах вĕсене, ют çын инкекне хăйсенни пекех çывăха йышăнса вут-çулăма хирĕç паттăррăн тăнă çыннăмăрсене. Хуралтăсем çунса кĕлленчĕç пулин те, вĕсем тăрăшнипе, çине тăнипе пирĕн тăван килĕмĕре хӳтĕлесе хăварма май килчĕ. Çĕре çити пуçăмăрсене тайса Йĕпреçри 28-мĕш номерлĕ пушар хуралĕн ĕçченĕсене тав сăмахĕ калатпăр. Тавах сире, пирĕн çурта вут-çулăм аллине паманшăн. Пурне те чĕререн тав туса ырлăх-сывлăх сунатпăр. Сăвап пултăр сире пире инкекре пăрахманшăн.

***Чĕререн тав туса – ДАНИЛОВСЕН çемйи.***

**667. Утерянный аттестат №0995919, серии А, выданный Новочурашевской СОШ в 1996 году на имя Краснова Вадима Яковлевича, считать недействительным.**


**ИБРЕСИНСКОЕ РАЙПО**

**ЗАКУПАЕТ картофель, свеклу, морковь, лук, рябину красную и черноплодную.
Телефоны для справок: 2-14-17, 2-13-92.**

**683. ОКАЗЫВАЕМ услуги по помолу зерна на мельничном комплексе «Фермер-3» по ул. Леспромхозная, 1 (сзади здания управления Пенсионного фонда);
РЕАЛИЗУЕМ отруби за 210 руб. 50 коп. (мешок).
Тел.: 89033580203.**

**650. ПРОДАЕТСЯ а/м ВАЗ-21099 1977 г. в., цв. белый, цена договорная, тел.: 89061314235, 89061314228.** 2-1

**В целях обеспечения устойчивой безопасной работы, эксплуатации и предупреждения возможных чрезвычайных ситуаций на объектах водоснабжения и канализации**
**В МУП «ВОДОКАНАЛ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА»**
**создана диспетчерская служба.
Телефон службы: 2-31-62.**


ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## ПĔВЕСЕМ ЮШКĂНПА ТУЛСА ЛАРНĂ

Липовка ялĕнче 3 пĕве пур, анчах вĕсем пурте юшкăнпа тулса ларнă. Пĕвесене тасатассипе çыхăннă ыйту питĕ çивĕчленсе çитрĕ. Эпир ăна граждансен пухăвĕсенче çĕклесшĕн те, анчах Ирçе Çармăс ял тăрăхĕн администрацийĕнче ĕçлекенсене хамăр патăрта кĕтсе илейместпĕр-çке. Вĕсем хăçан килсе каяççĕ, кампа тĕл пулса калаçаççĕ? Пĕлместпĕр те.

Пĕвесен тĕпне тулнă юшкăна çанталăк лайăх тăнă чухне тасатни питех те вырăнлă пулмалла та. Пирĕн çак ĕçе пурнăçлама техника çук. Камран пулăшу ыйтмалла? Тахçан Липовкăри вăрман пунктне каяттăмăр тĕрлĕпĕр ыйтупа, халĕ вăл хăй те аран-аран «сывлакалать».

Пĕвесенче шыв тулăх тăмасан, ăнсăртран кĕмсĕрт! тенĕ пек, вут-кăвар сиксе тухас тăк, мĕн курăпăр?.. Халĕ пĕр пĕвинче те шыв çук, вĕсем типсех ларнă.

Çак ыйтăва вăраха ямасăр татса пани кирлех.

***Ял çыннисем ыйтнипе – В. АНДРЕЕВ.***


**614. ПАССАЖИРСКИЕ ПЕРЕВОЗКИ по ЧР, РФ, г. Москва, Дивеево. ГАЗель, 15 мест. Тел.: 89053458859.** 5-5

**641. ПОКУПАЕМ волосы 14 сентября в Доме быта с 10 до 14 час. Тел.: 89033222090.** 2-2

**651. ПРОДАЕТСЯ 1-комн. квартира по адр.: ул. Энгельса, д. 69, кв. 9, 1-й этаж.**

**655. СНИМУ квартиру или дом с газ. отопл. в п. Ибреси. Тел.: 89278570235.**

**653. ПРОДАЕТСЯ кирпич, гравмасса. Т.: 89603041413.** 2-1

**648. КИРПИЧ. Стройматериалы на заказ. Тел.: 89278507267.** 3-1

**649. ПРИГЛАШАЮ НА РАБОТУ разнорабочих, поддонщиков. Оплата сдельная. Тел.: 89063861943.** 3-1

**659. 27 августа из стада в Черноречке ПРОПАЛА корова рыжей масти, живот, лоб, ноги до колен белые. Знающих о ее местонахождении просим сообщить по тел.: 89278401638. Вознаграждение гарантируем.**

**658. ПРОДАЮ а/м «Нива»-21213 2003 г. в., пробег 75 тыс., цент. замок, литой диск. Т.: 89603085431.**

**665. ПРОДАЕТСЯ а/м БМВ-3. Тел.: 89278663276.**


**Администрация района и Собрание депутатов района выражают глубокое соболезнование родным и близким в связи с преждевременной смертью депутата Собрания депутатов Ибресинского района четвертого созыва
ЧИЧАЙКИНА
Владимира Михайловича.**

**Совет и коллектив Ибресинского райпо глубоко скорбят по поводу преждевременной смерти бывшего председателя правления райпо
ЧИЧАЙКИНА
Владимира Михайловича
и выражают искреннее соболезнование семье и родным покойного.**

**Глубоко скорбим по поводу преждевременной смерти
ЧИЧАЙКИНА
Владимира Михайловича
и выражаем искренние соболезнования семье и родным покойного.**
***ЕМЕЛЬЯНОВЫ, КОРОТКОВЫ, СТЕПАНОВЫ, ТИМУКОВЫ, НИКОЛАЕВА, МАТВЕЕВЫ, КОЗЛОВЫ, ФЕДОСЕЕВЫ.***

**Коллектив Ибресинского ДРСУ глубоко скорбит по поводу скоропостижной кончины
ЧИЧАЙКИНА
Владимира Михайловича
и выражает соболезнование родным и близким покойного.**

**Администрация Буинского сельского поселения, жители Буинска глубоко скорбят по поводу кончины своего уважаемого земляка
ЧИЧАЙКИНА
Владимира Михайловича
и выражают соболезнование семье и родным.**

**Администрация Ибресинского городского поселения выражает глубокое соболезнование родным и близким в связи с преждевременной смертью депутата Собрания депутатов Ибресинского района
ЧИЧАЙКИНА
Владимира Михайловича.**


Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.



*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, производственный участок — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3279: чув. – 2419, русск. – 850 Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Кузнецов Г. В.